25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ЯНВАРЬ 12 ЫТЛАРИКУН 9(6246) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Январĕн 11-мĕшĕнче ÇУРÇĔР КАВКАЗРА пирĕн войскăсен генерал-лейтенант И. И. МАСЛЕННИКОВ ертсе пыракан группи хĕрÿллĕн çапăçнă хыççăн ГЕОРГИЕВСК хулипе чугунçул станцине, МИНЕРАЛЬНЫЕ ВОДЫ хулипе чугунçул узелне, ПЯТИГОРСК хулипе чугунçул станцине, КИСЛОВОДСК хулипе чугунçул станцине, ЖЕЛЕЗНОВОДСК хулипе чугунçул станцине тата БУДЕННОВСК хулипе чугунçул станцине, çавăн пекех тата АЧИКУЛАК, АРХАНГЕЛЬСКОЕ, АЛЕКСАНДРИЙСКАЯ ятлă район центрĕсене йышăнса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсене шута илеççĕ.

Çапăçусенче генерал-майор В. А. ХОМЕНКО, генерал-майор К. А. КОРОТЕЕВ, генерал-майор П. М. КОЗЛОВ, генерал-майор К. И. МЕЛЬНИК войскисем, генерал-лейтенант Н. Я. КИРИЧЕНКăПА генерал-майор А. Г. СЕЛИВАНОВăН гвардейски кавалерийски соединенийĕсем, çавăн пекех тата генерал-майор Г. П. ЛОБАНОВПА подполковник В. И. ФИЛИППОВăН танковăй группиесем уйрăмах палăрнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

ГОСУДАРСТВĂН ĔÇ РЕЗЕРВĔСЕНЕ ÇИТЕЛĔКЛĔ ХАТĔРЛЕР

Пирĕн социализмлă халăх хуçалăхĕ план тăрăх аталанса пыни ĕç вăйне планлă йĕркепе хатĕрлес, ăна тĕрĕс вырнаçтарса тухас задачăна кăларса тăратрĕ. 1940 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ государствăн ĕç вăйĕсен резервĕсем çинчен Указ кăларчĕ. Ун хыççăн СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Ĕç вăйĕсен резервĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнăй Управленине тăвасси çинчен, хуласемпе колхозсенчи çамрăксене призыв йĕркипе ремесленнăй училищĕсене, чугунçул училищисене тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсене илесси çинчен постановлени йышăнчĕ.

Унтанпа икĕ çул ытла иртрĕ. Çак тапхăрта совет государстви хăйĕн ĕç резервĕсене сахал мар хатĕрлерĕ, пирĕн промышленноçпа транспорта рабочи класăн çĕнĕ отрячĕсене — хастарлă та пултарулă çамрăксене пачĕ. Училищĕсемпе шкулсенчен çирĕп квалификаци илсе вĕренсе тухнă çамрăксем пирĕн промышленноçăн малашлăхĕ, унăн вăйлă кадрĕ пулса тăраççĕ.

Рабочи класăн квалификациллĕ кадрĕсене хатĕрлесси — мирлĕ вăхăтрах государствăн пысăк ĕçĕ пулнă. Халĕ, отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, рабочисен пĕр пайĕ тăван çĕршыва сыхлама фронта кайнă май, Хĕрлĕ Çар кунран-кун ытларах хĕçпăшалсемпе боеприпассем ыйтнă май, ĕç вăйне хатĕрлесси государствăн — питех те пысăк задачи пулса тăнă. Пирĕн промышленноçпа транспорта [illegible] фронта тата [illegible] кирлĕ продукци туса кăларма пирĕн фабрикăсемпе заводсем ĕç вăйĕ [illegible]. Предприятисене кирлĕ квалификациллĕ рабочисене, пĕр енчен, фабрика-завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсем, ремесленнăй тата чугунçул училищисем хатĕрлесе парас тенĕ.

Çамрăк рабочисене вĕренсе хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн республикăра темиçе чугунçул училищи, фабрика-завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсем ĕçлеççĕ. Çак çулăн малтанхи [illegible] вĕсенчен хăшпĕрисем [illegible] вĕренекенсене [illegible] предприятисене ĕçлеме [illegible].

Иртнĕ çулсенче [illegible] тăрăх, Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ (директорĕ Власов юлташ) лайăх ĕçлесе кăтартнă. Ку шкула вăрçă вăхăтĕнче организациленĕ пулин те, унта çамрăк кадрсене плана [illegible] вĕрентсе кăларнă. Вĕренсе тухнă çамрăксен квалификацийĕ лайăх. Шкулăн, тĕпрен илсен, 3-мĕш разрядлă рабочисене хатĕрлемелле пулнă. Вĕренĕве [illegible] лайăх йĕркелени пирки кунта 4-мĕшпе 5-мĕш разрядлă рабочисене те хатĕрленĕ. 4-мĕш разряда, сăмахран, 31 процент, 5 разряда 46,2 процент, 6 разряда 2,4 процент вĕренсе тухнă. Кунти çамрăксем [illegible]: вĕренсе тухнисенчен чылайăшĕ «отлично» тата «хорошо» паллăсем илнĕ, [illegible] илнисем пĕрре те çук.

7-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ çакăн пек çитĕнÿ [illegible]

Анчах çак вăхăтрах республикăри [illegible] ФЗО шкулсем [illegible]

кирлĕ пек йĕркелемен, çавна пула вĕсен иртнĕ кăларăмĕнче пысăк çитменлĕхсем пулчĕç. Куславккари 2-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнчен (директорĕ Суриков юлташ) вĕренсе тухакансенчен 46 проценчĕ «хорошо» тата «отлично» паллăсем илнĕ пулин та, шкул çак кăларăма лайăх ирттернĕ теме çук. Мĕншĕн тесен шкулăн план тăрăх халĕ вĕрентсе кăларнинчен нумай ытларах вĕрентсе кăлармалла пулнă.

Государствăн ĕç резервĕсене хатĕрлесси—хальхи вăхăтри питех те кирлĕ тата ответлă ĕç. Унăн ăнăçлăхĕ ку тĕлĕшпе тÿрремĕн ĕçлекен работниксем пултарулă ĕçленинчен çеç мар, вĕсене партипе совет организацийĕсем пулăшса тăнинчен те килет. СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, училищĕсемпе шкулсенче вĕренме хуласемпе колхозсенчи çамрăксене призыв йĕркипе илеççĕ. Училищĕсемпе шкулсене вĕренме иличчен малтан ку тĕлĕшпе кашни районпа хулана план параççĕ. Районсемпе хула Совет исполкомĕсен çав плана пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн кĕрешмелле, училищĕсемпе шкулсене вĕренме ачасене вăхăтра тата кирлĕ таран ямалла. ФЗО шкулĕсене иртнĕ хутра вĕренме илнĕ чух чылай районсен исполкомĕсем çителĕксĕр ĕçлерĕç. Уйрăмах Канаш районсовет исполкомĕ плана чылай тултармарĕ.

Çитес вăхăтрах ФЗО шкулĕсем вĕренекенсен çĕнĕ йышне илме тытăнаççĕ. Ку хутра иртнĕ уйăхсенче пулнă çитменлĕхсене сирмелле, (шкула илме тивĕçлĕ ачасене малтанах хатĕрлеме [illegible]

[illegible]

Предприятисен руководителĕсем, шкул директорĕсем тата партипе комсомол организацийĕсем [illegible]

Çĕршывра Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ хумĕ сарăлса пырать. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртура [illegible]

ЕЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă, вĕсем çак Халăх Комиссариачĕ тăрăх пирĕн республикăри Н-ски завод (директор заместителĕ Бунин юлташ) лайăх ĕçленине палăртса, ăна ИККЕМĔШ преми пама йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Çурçĕр Кавказра,** малалла наступлени туса пырса, **Воронцово-Александровское** хулине, **Каменно-Мостская** ятлă район центрне, **Сормоково, Камлуков, Малка, Петровский, Отказная, Ново-Заведенская, Обильное, Георгиевская, Незлобная, Лысогорская** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **Кума** ятлă чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

Дон шывĕн анатри районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Иртнĕ эрнере, январĕн 3-мĕшĕпе 9-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсем çинче нимĕçсенне 313 самолет пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн 93 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн 12.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн артиллери пенипе, çавăн пекех тата пирĕн штурмлакан отрядсем кĕрешнипе нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити, 2 оруди пĕтерсе тăкнă, 27 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ. Совет разведчикĕсем нимĕçсен 17 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Чылай участоксенче нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Н-ски часть малалла куçса пырса пĕр кун хушшинче противникăн 6 контратакине сирсе пăрахнă. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ, анчах вĕсем совет войскисен наступленине чарса лартма пултарнă. Каç пулнă чухне пирĕн подразделенисем, хăвăрттăн малалла кайса, противникăн флангĕсем патне тухнă та тăшман çине кĕтмен çĕртен çĕмĕрсе кĕнĕ. Çур сехет хушши пынă тытăçура нимĕçсене çапса аркатнă. 600 ытла гитлеровеца, нимĕçсен 8 танкне пĕтерсе тăкнă, 10 оруди, 27 пулемет, 12 миномет, 43 автомашина тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Зимовники районĕнче совет войскисем халăх пурăнакан татах та темиçе пункта нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă, противника чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк сиен кÿнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра çапăçусем малтанхи еннеллех пулса пынă. Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем, танксемпе бронемашинăсен хÿттинче пырса, темиçе контратака тунă. Пирĕн подразделенисем, пăшалсемпе пулеметсенчен тата минометсенчен вăйлăн персе, противникăн пехотине танксемпе бронемашинăсенчен татса уйăрнă та ăна пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Тепĕр участокра Маслов юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем, вут-çулăмпа вăйлăн тапăнса, нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити, 3 танка пĕтерсе тăкнă тата противник артиллерийĕн вут-çулăмне пусарса лартнă.

* * *

Çурçĕр **Кавказра пирĕн войскăсем** çапăçусемпе малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă тата тыткăна нумай илнĕ. Ытти участоксенче пирĕн войскăсем, противникăн çапса аркатнă чаçĕсене йĕрлесе пырса, йышлă трофейăсем тытса илнĕ. Тĕплĕн тĕрĕслесе палăртнă тăрăх çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 20 танк, 170 автомашина, 180.000 снаряд, 25.000 ручной граната, 19.000 мина, противотанковăй пăшалсем валли 141.000 патрон, 2 миллиона çити винтовка патронĕсем, динамит патронĕсемпе ракета патронĕсем 5 миллион, 400 ещĕк тол, артиллери снарядĕсен гильзисем 3 миллион, йĕплĕ пралук—12.000 кăшкар тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем икĕ кун хушшинче 247 гитлеровеца вĕлернĕ. **Снайперсем—кĕçĕн** лейтенант Дробяной **юлташ тата красноармеец** Авраменко **юлташ, тăшманăн** траншейисенчен инçех мар майлă вырăн йышăнса, пĕр кун хушшинче пĕри—12 гитлеровеца, тепри вара—11 гитлеровеца вĕлернĕ. Ленинград патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен 2 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Латви ССР-ĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен отрядри партизансен ушкăнĕ нимĕçсен 3 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Эшелонсенчен пĕрине 2 паровоз туртса пынă. Вагонсенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем туллиех пулнă. Крушени пулнă чухне вагонсенчен ытларахăш пайĕ çĕмĕрĕлнĕ. Тепĕр темиçе сехетрен крушени пулнă вырăна нимĕçсем ятарласах санитарнăй поезд янă. Йывăр аманнă тата вилнĕ гитлеровецсене санитари команди кунĕпех пуçтарнă. Латви партизанĕсен тепĕр отрячĕ çул çинче **засадăсем туса** тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 44 çынна вĕлернĕ, 28 çынна амантнă.

* * *

Бобруйск хули çынни Андрей Сущевский, Минскри концентрациллĕ лагерьтен тарнăскер, çапла каласа панă: «Минск хулинчен 6 километр аяккарахра вырнаçнă концентрациллĕ лагерьте мирлĕ совет гражданĕсемпе советăн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсем 8.000 çынна яхăн асапланаççĕ. Хупнă çынсене гитлеровецсем вĕлерсе пыраççĕ, анчах лагере çĕнĕрен çĕнĕ çынсемпе тултараççĕ. Кунта нимĕçсен çар влаçĕсен приказĕсене хирĕç саботаж тунă тесе шутласа совет гражданĕсене, Германие ярассине хирĕç тăнă арçынсемпе хĕрарăмсене, нумай тĕрлĕ тата вăй çитерейми налогсене тÿлесе татман хресченсене илсе килеççĕ. Ноябрь уйăхĕнче лагĕре чугунçул çинче ĕçлекен рабочисемпе служащисене 200 çынна çити ытла хăваласа пычĕç. Çав рабочисемпе служащисем нимĕç захватчикĕсемшĕн ĕçлессине татăклăн хирĕç тăнă. Малтанхи кунах вĕсене тискеррĕн хĕнесе пĕтерчĕç. Аксютич машиниста тата Володько диспетчера хытă хĕнерĕç. Малицевич учителе гитлерла палачсем декабрьти сивĕре пĕтĕмпех çарамаслантарнă та ун çине шыв сапса тăнă. Лагере сыхлакан штурмовиксем кунсерен вуншар çынна вĕлереççĕ. Лагерьте çавăн пекех тата хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле арестленĕ ачасем те чылай. Нумай ачасем сивĕпе тата выçăпа вилеççĕ»

* * *

Берлинри авиаци заводĕсенчен пĕрин аэродромĕ çинче декабрĕн 17-мĕшĕнче самолетсене тĕрĕсленĕ чухне 5 çар самолечĕ ÿксе çĕмĕрĕлнĕ. Çавна май вара туса кăларнă нумай самолетсен пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. Çав заводра ют çĕршывсенчен илсе пынă рабочисем нумай ĕçлеççĕ.

Январĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Дон шывĕн **анатри** районĕнче, Центральнăй **фронтра тата Çурçĕр Кавказра** малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Сталинградăн завод поселокĕнче пирĕн штурмлакан группăсем тăшман оборонин тĕреклетнĕ пунктне йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет подразделенийĕсем 13 пулемет, 4 миномет, 7 противотанковăй пăшал, 200 винтовка тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем противникăн контратакисене сире-сире ярса наступлени туса пынă. Н-ски часть халăх пурăнакан пункта йышăнса илсе трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче боеприпассен пысăк склачĕ, радиостанци тата 18 автомашина. Нимĕçсем контратака тума хăтланнă, анчах пулеметсенчен персе тăнине тĕл пулса, çапăçу хирне 100 салтак виллине пăрахса хăварнă та каялла чакнă. Тепĕр участокра пирĕн танксем тата моторизованнăй пехота малалла куçса пырса, противникăн икĕ батальонне аркатса тăкнă. Нимĕçсен 6 танкне тата 4 орудине пĕтерсе тăкнă, пĕр танк, 2 бронемашина тата 11 грузовой автомашина тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен вăйĕн пĕр пайĕпе противникăн контратакисене сире-сире янă. Н-ски чаçăн боецĕсем хаяр çапăçура противникăн 9 танкне персе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă, хăй тĕллĕн çÿрекен 3 орудине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пехотин пĕр ротине ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра противник пысăк çухатусем тÿссе пирĕн позицисен ăшне савăлланса кĕме пултарнă. Татăклăн хирĕç пырса çапнипе пирĕн боецсем нимĕçсене малтанхи рубежсем патнех сирсе ывăтнă. Çапăçу хирне тăшманăн 200 вилли ытла, çунтарса янă 3 танк тата гитлеровецсем пăрахса хăварнă нумай хĕçпăшалсем выртса юлнă.

* * *

Çурçĕр Кавказра Н-ски соединенин чаçĕсем, ăнăçлăн малалла куçса пырса, противника халăх пурăнакан 13 пунктран çапса кăларнă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен 250 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 6 оруди, 32 пулемет тата радиостанци тытса илнĕ. Пĕр юханшыв хĕрринче уйрăмах вăйлă та хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Гитлеровецсем кунта артиллери, ултă кĕпçеллĕ минометсем нумай тата 20 ытла танк пухса тăратнă. Противник персе тăнине пăхмасăрах пирĕн боецсем шыв урлă каçнă та нимĕçсем вырнаçнă тĕле çĕмĕрсе кĕнĕ. Штыкпа çĕççĕн тăрса çапăçнă хыççăн гитлеровецсене çĕнтернĕ. Пирĕн войскăсем йышлă трофейăсем пуртса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Краснодар крайĕнче кĕрешекен партизансен отрядне нимĕçсен подразделенийĕсем çавăрса илме хăтланнă. Кун каçиччен совет патриочĕсем противника темиçе хут пыра-пыра тапăнса ăна халран янă. Засадăсенчен тапăнса тăшманăн 100 ытла салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Меллĕ маневрсем туса партизансем тăшманăн ункинчен тухнă. Краснодар партизанĕсен тепĕр отрячĕ чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 306-мĕш пехотнăй дивизийĕн 580-мĕш полкĕнчи 3-мĕш батальонран тыткăна лекнĕ лейтенант Герберт Книш çапла каласа панă: «306-мĕш дивизи Бельгире гарнизонри службăра тăратчĕ. 1942 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче пире васкавлăн Хĕвелтухăç фронтне Брюссел — Дюссельдорф — Лейпциг — Шахты маршрутĕпе ăсатрĕç. Шахты текен вырăна 580-мĕш тата 581-мĕш полксем декабрĕн 10—12-мĕшĕнче çитрĕç. Унтан вара автомашинăсемпе тÿрех фронта ячĕç. Халăх пурăнакан пĕр пунктра эпир хамăрăн арканнă тата лутăрканнă чаçсене улăштартăмăр та, вĕсен позицийĕсене йышăнтăмăр. Çав кунах вырăссем пире атакăларĕç те каялла чакарчĕç. Малтанлăха эпир йĕркеллех чакрăмăр, унтан вара çавăрса илессинчен хăраса, сурантанисене хăйсем тĕллĕн пăрахса хăварсах тарма тытăнтăмăр. Анчах ку ĕç те пире пулăшмарĕ. Вырăссен танкĕсем пирĕн чакмалли çулсене пÿлчĕç. Пирĕн лару-тăру питĕ шанчăксăррине кура, эпир тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Аялараххра Калинин облаçĕнчи Балоболкино ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Болоболкино ялĕнчен тухса каяс умĕн нимĕç захватчикĕсем унта пурăнакансене урама хăваласа тухнă. Пурин куçĕ умĕнчех вĕсем: 65 çулти Ефим Саратова, 45 çулхи Агафия Долгачевăна, 6 çулхи Дмитрий Новикова, 70 çулхи Иван Климова, 15 çулхи Кузьма Куликова, 75 çулхи Рассать Терентие, 70 çулхи Иван Платонова, 72 çулхи Дмитрий Колодкова тата ытти хресченсене те персе вĕлернĕ. Нимĕçсен темиçе салтакĕ çамрăк колхозницăна Евдокия Новиковăна аяккалла сĕтĕрсе кайнă та пĕтĕм халăх умĕнче мăшкăлланă хыççăн автоматран персе вĕлернĕ. Чĕрĕ тăрса юлнисене гитлеровецсем конвойпа сыхласа ялтан хăваласа тухса кайнă. Пире тарма, фашистсен тыткăнĕнчен çăлăнма май килчĕ». Акт çине Балоболкино ялĕнче пурăнакансем Курдяков, Гурьянова, Сидоров алă пуснă.

Танксен „Колхозник Чувашии" колоннине тума татах 12.800 тенкĕ пачĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 10-мĕшĕ. **(Телефонпа).** «Коминтерн» колхоз членĕсем Сталин саламне вуланă хыççăн, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума татах та тепĕр хут укçа пухса хыврĕç. Колхоз счетоводĕ Петров юлташ 5.000 тенкĕ, председателĕ 3.000 тенкĕ пачĕç. Çавăн пекех колхозниксемпе колхозницăсем те çак ĕçе хутшăнчĕç. Тĕслĕхрен, колхозник Степанов 1.000 тенкĕ, фронтовик арăмĕ О. Михайлова юлташ 300 тенкĕ пачĕç.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума колхозниксем унччен 30.000 тенкĕ пухса панăччĕ, халĕ татах 12.800 тенкĕ пухса пачĕç.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Колхозник Д. Беляев юлташ 50.000 тенкĕ хыврĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз членĕ 60 çулхи старик Д. Беляев юлташ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 50.000 тенкĕ хыврĕ.

— Манăн икĕ ывăл фронтра нимĕç пусмăрçисене хирĕç çапăçаççĕ. Эпĕ вĕсене колхозри тухăçлă ĕçпе çеç мар, нумай çулсем хушши перекетлесе пынă хамăн укçапа та пулăшасшăн. Манăн укçапа тунă хĕçпăшал ылханлă тăшмана вилĕм кÿтĕр, çĕнтерÿ кунне çывхарттăр,—терĕ укçана хывса Беляев юлташ.

Н. ВИНОГРАДОВ.

50.000 тенкĕ пухнă

ШАМАРША. «Юлташ» колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 50.000 тенкĕ укçа пухнă. Колхоз председателĕ Абульханов — 2.000 тенкĕ, колхозник Кузьмин — 1.500 тенкĕ, Мошкалев, Корсаков, Степанов юлташсем 1000-шар тенкĕ панă.

С. АНТИПОВ.

Папанин ячĕпе тăракан колхоз çамрăкĕсем

КАЛИНИНО. Папанин ячĕпе тăракан колхоз çамрăкĕсем фронта пулăшас ĕçе пысăк çеклемуÿпе туса пыраççĕ. Комсомолецсем танксен колоннине тунă çĕре, çар чаçĕсене ярса пама пахча-çимĕç пухнă çĕре активлăн хутшăнаççĕ. Комсомолец И. Кураков юлташ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 2.000 тенкĕ пачĕ. Комсомолецсем пуçарнипе колхозра Хĕрлĕ Çар валли пĕр тонна çĕрулми, 18 пăт пăрçа пухнă.

Г. АНДРЕЕВ.

„Красная Чувашия" колхозра

Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия» колхоз Тăвай районĕнче лайăх ĕçлекен колхозсенчен пĕри. Ку колхозри колхозниксем социализмла ăмăртса ĕçлесе иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене чи малтан вĕçлерĕç, государство умĕнчи обязательствăсене те малтан парса татрĕç. Колхоз халĕ çуракине хатĕрленет. Ку ĕçре уйрăмăнах 2, 5, 9-мĕш бригадăсем малта пыраççĕ. Çавăн пекех пахча-çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Тимофей Васильев бригади те хатĕрленÿ ĕçĕсене аван туса пырать. Ку бригада пахчана 200 лав тислĕк кăларнă, 500 центнер торф хатĕрлесе хунă, пахча-çимĕç бригади членĕсенчен кашниех пĕрер центнер кĕл пухнă. Пахча-çимĕç вăрлăхĕсем çителĕклĕ таранах пур. Вăрлăха шăтарса çитĕнтерме парник хатĕрленĕ, ăна мартăн 1-мĕш тĕлне ĕçе яраççĕ.

Колхозпа колхозниксем фронта пулăшас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Тырпул тата аш-какай обязательствисене чыслăн пурнăçланă хыççăн, «Красная Чувашия» колхоз 1943 çулта МТС ĕçлессишĕн государствăна 433,67 центнер тырă аванс шучĕпе панă, унсăр пуçне 57 центнер тырă государство хакĕпе сутнă. Аш-какай хатĕрлевĕн 1943 çулхи обязательстви шучĕпе 91,22 центнер, Хĕрлĕ Çар фондне 19,46 центнер панă.

Вăйлă тырпулшăн, обязательствăсене вăхăтра парса татассишĕн кĕрешнисĕр пуçне, вĕсем фронта ытларах танксемпе самолетсем парассишĕн тăрăшаççĕ. Нумай пулмасть, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 62 пин тенкĕ укçа хывнă. Сталин юлташăн отвечĕ çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕ. Çавăн хыççăн вара вĕсем самолетсен «Красная Чувашия» звенине тума çĕнĕрен 300.000 тенкĕ укçа пухса хывրĕç.

В. ЧЕРНОВ.

Илемлĕ литература пухаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Мускав хулипе облаçĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвне сÿтсе явнă хыççăн, районри комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли илемлĕ литература пухма тытăнчĕç. Сĕнтĕрвăрринчи фельдшер шкулĕнче вĕренекенсем пурĕ 40 кĕнеке пухса Хĕрлĕ Çарăн фронтри пĕр чаçне посылкăпа ăсатрĕç. Фронтовиксем валли илемлĕ литература пухас ĕçе Шуркассинчи, Упакассинчи тата Юртакассинчи шкулсенче вĕренекенсем те активлăн хутшăнаççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Пурнăç юсанать

Çĕçенхир тапхăрĕнче хула таçта-ках курăнса ларать. Эпир тикĕс аэродром çине кĕретпĕр. Тĕрлĕ енче фашистсен самолечĕсен тĕксĕм хаписем курăнса лараççĕ. Вĕсем çирĕме яхăн. Аэродром территорийĕ çинче тĕрлĕ калибрлă бомбăсем вĕçĕ-хĕррисĕр сапаланса выртаççĕ.

Акă вăл хăй — çĕçенхирти хула. Котельниково. Юлашки уйăхсем хушшинче çав хулашăн виçĕ хутчен вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Фашистсен çĕмĕрĕлнĕ тата çунса кайнă танкĕсем кашни утăмрах тĕл пулаççĕ. Автомашинăсем, гусеницăллă транспортсем, тягачсемпе мотоциклсем нумай, вĕсенчен чылайĕшне ĕçе янă та ĕнтĕ, вĕсем хула урамĕсем тăрăх çÿреççĕ. Тĕксĕм кĕтессенче, килкартисенче — çĕмĕрĕлнĕ тупăсем, ултă кĕпçеллĕ минометсем, зенитлă тата противотанковăй тупăсем нумай лараççĕ. Шаршанласа хунă снарядсем, йĕркесĕр йăваланса выртакан патронсем.

Станцире тата хула варринче трубасем пысăк склачĕсем, хĕçтимĕртен тунă кăмакасем нумай. Сталинград патĕнче хĕл каçма гитлеровецсем çине тăрсах хатĕрленнĕ. Хулара сăнăхпа консерва, типĕтнĕ пахча-çимĕçпе ытти тĕрлĕ продовольстви запасĕсем пайтах тăрса юлнă. Хула варринчи лупас сенчен пĕр пайне гитлеровецсем çунтарса янă.

Хăйсем чакса каяс умĕн фашистсем нумай çуртсене пĕтерсе тăкнă. Хулари клубран хăрамланнă стенасем кăна тăрса юлнă. Райздрав çуртне, эпидеми станцийĕн çуртне, универмага тата ытти тĕрлĕ обществăллă çуртсене çунтарса янă.

Ирĕке кăларнă хулан урамĕсенче пурнăç çĕнĕрен хавхаланса чĕрĕлни сисĕнет. Хулари çынсем çуртсем патĕнче, урлă-урамсенче ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса тăраççĕ. Хула урлă хăнтăралла тата хĕвеланăçнелле каякан пирĕн çар чаçĕсене вĕсем хаваслăн саламлаççĕ. Хаяррăн кĕрлесе иртеççĕ совет танкĕсем, пирĕн лайăх хĕçпăшалланнă мотопехота ларса пыракан автомашинăсем чупаççĕ, тягачсем йывăр тата çăмăл тупăсене туртса малаллах шăваççĕ.

Çĕнĕ çулăн, çĕнĕ ĕçсен, çĕнĕ ĕмĕтсен пĕрремĕш кунĕсем. Çулсем çинче, депора, станцире çынсем пурте вăй хурса ĕçлеççĕ. Икĕ старик, пенсионер пулнăскерсем — çулйĕр бригадирĕ Петр Иванович Пугачев тата çулйĕр мастерĕ Сергей Власович Пильнев, — çулсене тасатса юсас ĕçе ертсе пыраççĕ. Нимĕçсем Ростовран пуçласа Сталинград патне пымалли вырăнсене çитиччен хăйсен узкоколейкине хывнă. Пирĕн наступлени тăвакан войскăсем хыççăн чугунçулсене юсас тĕллевпе ĕçлекен отрядсем пыраççĕ, вĕсем нимĕçсем тунă ансăр çулран анлă çул хываççĕ. Пугачевпа Пильнев юлташсем отрядсем килсе çитиччен вĕсен ĕçне çăмăллатас тесе, çулсене хатĕрлесе хума шут тытнă.

Опытлă котельщиксем Марев, Игнат Иванов тата Иван Перевозов, инженер-механик Кучеряевпа пĕрле, паровозсене ремонтлаççĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Кучеряев нимĕçсем строя кăларнă водокачкăсене юсас ĕçе ертсе пырать. Вĕсенчен пĕрринче пăс хуранне юсаса ĕçе янă та ĕнтĕ. Водопровод магистралĕсене тĕрĕслесе пуçланать. Электриксем электростанцине унăн сетьне юсас ĕçе вĕçлесе çитереççĕ.

Пĕр-икĕ кунран паровозсемпе вагонсем юсакан мастерскойсенчи станоксем çаврăнма тытăнаççĕ. Мĕнпур юсас ĕçе кунта машинист Петр Игнатьевич Рымарев ертсе пырать. Нимĕçсем Котельниковăра тăнă чухне вăл вăрттăн çĕрте пурăннă. Станцие нимĕçсенчен ирĕке кăларсанах, транспортниксем Рымарев коммуниста, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, станци хуçалăхне юсас тĕллевпе ĕçлекен оргбюро председательне суйланă.

Железнодорожниксене Н-ски çар чаçĕ пысăк пулăшу парать. Командирăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ тата политработниксем станципе депора кулленех пулаççĕ. Вĕсем рабочисемпе калаçусем ирттереççĕ, железнодорожниксене пулăшма боецсене тата командир-специалистсене уйăрса параççĕ.

Пурнăçа юсас ĕç пĕтĕм хулара та çавăн пекех пысăк çĕкленÿпе пырать. Хула советĕнче исполком председателĕ Кожевников юлташ патĕнче пĕрмаях халăх. Пысăк мар пÿлĕмре хĕрарăм-врачсем киллĕкĕн ĕçлеççĕ. Гитлеровецсем хулари больницăна аркатса тăкнă. Хĕрарăмсем больницăпа амбулатори тата аптека валли çĕнĕ çуртсем тупнă; койкăсемпе матрацсем тата кирлĕ оборудованисем тупнă.

Çĕвĕçсемпе атă çĕлекенсен артелĕсен членĕсем пухăнаççĕ, вĕсем хăйсен производствине юсама тытăнаççĕ. Хулари предприятисенчен чи малтан армап ĕçлеме тытăнчĕ. Чи юлашки самантра нимĕçсем армана ишĕлтерме, унти оборудованине стройран кăларма шутланă, анчах та Кадулин механик, гитлеровецсене сăнаса тăнăскер, вĕсене çав плана пурнăçа кĕртме чăрмантарнă. Пысăк мар сиенсене пурне те тÿрлетнĕ, арман çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă.

Учительсем партăсемпе сĕтелсем шыраса тупас тĕллевпе ĕçлеççĕ. Гитлерла салтаксем шкул çурчĕсене ирсĕрлесе, ишĕлтерсе пĕтернĕ. Парти райкомĕпе хула Совечĕ хулари халăха мĕнпур шкулсемпе обществăллă учрежденисен çурчĕсене тасатса юсас ĕçе организацилеççĕ.

Хула комендатурипе жандарм комендатури çинчен нимĕç чĕлхипе çырнă ылханлă вывескăсене иле-иле пăрахаççĕ. Офицерсем пурăннă çуртсенчен эрех кĕленчисемпе çÿп-çапа шăлса кăлараççĕ. Тăшман хулара пулнине палăртакан ирсĕр йĕрсене пĕтĕмпех пĕтереççĕ.

Пурнăç пĕтĕмпех çĕнĕрен, хамăр майлă, совет йĕркине тивĕçлĕ пек юсанса йĕркеленет.

В. КУПРИН, Д. АКУЛЬШИН.
КОТЕЛЬНИКОВО, («Правда» хаçатăн çар корреспонденчĕсем).

Оборона гектарĕсем çинче ÿстерсе илнĕ тырра—оборона фондне

Çĕршыври малта пыракан колхозсем пуçарнипе, 1942 çулхи çуркунне Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем оборона фондне хывма 166,5 гектар тырă акса хăварчĕç. Çак тырпула тахçанах пухса илнĕ, анчах ăна государствăна парас ĕçе районра организацилемен. «Марксист» колхоз оборона фончĕ валли планран ирттерсе 2 гектар, Калинин ячĕпе тăракан колхоз—5 гектар, «Смычка» колхоз—2 гектар, «Красный герой» колхоз—2 гектар акса хăварнă пулнă. Анчах çав çĕр лаптăкĕ çинчи тырпула ку колхозсем ытти тырпулпа пĕрле пухса кĕртнĕ. Оборона фондне пĕр килограмм тырă та паман. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз кăна, оборона фондне пама 2 гектар акса хăварнăскер, вăл çĕр çинчи тырра уйрăммăн пухса кĕртсе пĕтĕмĕшпех оборона фондне панă.

Кунта çакна палăртса хăвармалла. Эпир час-часах хамăр пуçарнă ĕç çинчен манса каятпăр, ăна вĕçлеме тăрăшмастпăр. Оборона гектарĕсене акса пуçтарса илнĕ хыççăн вăл тырпула оборона фондне хывас ĕçе ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем организацилеме тăрăшман, колхозсене çакăн çинчен аса илтермен. Çавăнпа та, Сĕнтĕр районĕнче анчах мар, ытти районсенче те оборона гектарĕсем çинчи тырра уйрăммăн пухса илсе оборона фондне парас ĕçе организацилемен. Çак йăнăша тÿрлетес пулать. Колхозсем хăйсем çине обязательство илсе акса хăварнă оборона гектарĕсен тыррине оборона фондне хывасси—колхозсемпе колхозниксен чыслă тивĕçĕ пулса тăнине асра тытас пулать.

Пĕлтĕр, Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явса, Сĕнтĕр районĕнчи колхозниксем çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çар фондне пама хăйсен хуçалăхĕнче выльăхсем самăртма пулса обязательствăсем илнĕччĕ. Сĕнтĕр районĕнчи 51 колхозри колхозниксем оборона фондне 542 чăх, 72 сысна, 20 пăру, 21 хур, 28 кăвакал, 40 кролик, 39 сурăх тата 5 кăркка самăртса пама пулнă. Анчах та Сĕнтĕр районĕнче çакăн çинчен те каярахпа манса кайнă, колхозниксем илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртес ĕçе тивĕçлипе организацилемен. Çавăнпа районра 64 чăх, 9 сысна, 19 пăру, 19 кролик, 2 сурăх самăртса оборона фондне панă та лăпланса ларнă. Калинин ячĕпе тăракан тата «Красный герой» колхозсенче выльăх самăртса пама пулнă колхозниксене те пĕлмеççĕ.

Çакăн пек çитменлĕхсем ытти районсемпе колхозсенче те тĕл пулаççĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен колхозниксем хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртес ĕçе организацилес пулать, колхозниксен хăйсен килĕнчи выльăх-чĕрлĕхе самăртса оборона фондне пани—тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнчи таса тивĕçлĕ ĕç пулни çинчен колхозниксемпе колхозницăсене кулленех ăнлантарса парас пулать.

Оборона гектарĕсенчен пухнă тырра хатĕрлев пунктне леçнĕ

Иртнĕ çуркунне Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем Оборона фончĕ валли сураки планĕнчен ирттерсе тырă, пахча-çимĕç акса хăварчĕç. Нумай колхозсем оборона гектарĕсем çинчи тырра, пахча-çимĕçе уйрăммăн лайăх пăхса çитĕнтерчĕç, тăкалламасăр пухса илчĕç.

Оборона гектарĕсем çинчен пухса илнĕ пĕтĕм тырра колхозсем Оборона фондне хывма хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Çапла пирĕн районри колхозсем иртнĕ çул планран ирттерсе 80 гектар тырă акса турĕç, вăл гектарсем çинчен пухнă 27 тонна тырра пĕтĕмĕшпех оборона фондне хыврĕç.

Колхозсем тата колхозниксем пĕрлешÿллĕ хуçалăхран та, хăйсем ĕçлесе тунă тупăшран та Хĕрлĕ Çара валли тырă параççĕ. Колхозниксен патриотизмлă туйăмĕ вăйлăн ÿсрĕ, кашни колхозникпе колхозница халь пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсене пăхăнтараççĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă хыççăн, колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли 2.159 пăт тĕштырă уйăрса пачĕç.

А. ВАХНИН,
ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар фондне—235 тонна тырă

ЭЛĔК, январĕн 11-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра парса татрĕç, 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк çитĕнÿсемпе вĕçлерĕç.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерÿллĕ ĕçĕсемпе хавхаланса, колхозниксем фронта паракан пулăшăва ÿстереççĕ. Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксене саламлани тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав туни çинчен пĕлсен, районри колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне хăйсенчен 235 тонна тырă хывма йышăнчĕç. Çак тырă халь кулленех пуçтарăнса пырать. Ĕнерхи куна хатĕрлев пунктне 67 тонна леçнĕ.

Колхоз активĕ патриотизмлă çак пысăк ĕçре пĕтĕм массăна пример кăтартать. Жданов ячĕпе тăракан колхоз счетоводĕ Петриков юлташ Хĕрлĕ Çар фондне 25 пăт ыраш, 21 килограмм тыр пачĕ, «Ударник» колхоз председателĕ Платонов юлташ 20 пăт тырă, «Доброволец» колхоз председателĕ Сочков юлташ 22 пăт тырă хыврĕç.

«Марс» колхоз членĕсем Якимов, Семенов, Евграфов тата ытти нумай юлташсем Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне 9—10-шар пăт тырă хываççĕ.

ФЕДОТОВ,
ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ.

Уйăхри плансене срокчен тултарма пулчĕç

КАНАШ. Малта пыракан 172-мĕш номерлĕ заводăн коллективĕ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине производствăллă çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме чĕнсе каланине вагонсем юсакан заводри хăшпĕр цехсенче сÿтсе-явнă. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, цех коллективĕсем çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Вагонсем тăвакан цех коллективĕ, сăмахран, январьти ĕç планне срокчен икĕ кун малтан, февральти плана Хĕрлĕ Çар уявĕ тĕлне тултарма пулчĕ. Çавăн пек татăклă обязательствăсем ку цехри уйрăм комплекссемпе бригадăсем те илнĕ.

Выранти удобренисене хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх

Выранти удобренисене ытларах хатĕрлер

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа республикăра выранти удобренисене хатĕрлесе турттарас тĕллевпе уйăхлăх иртет. Çак уйăхлăхра республика уйхирĕсене 662 пин тонна тислĕк, 136 пин тонна торф хатĕрлесе турттарса кăлармалла, ытти хаклă удобренисене те — кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали сахал мар пухмалла.

Комсомольски, Элĕк, Шупашкар, Чкаловски тата ытти районсенчи колхозсем çак уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Сăмахран, Комсомольски районра уйăхлăхăн малтанхи пилĕк кунĕнче 4.406 тонна тислĕк турттарса хире кăларнă, задани тăрăх 3.630 тонна кăлармалла пулнă. Малтанхи пилĕккунлăха задание Шупашкар, Çĕмĕрле, Элĕк районĕсенчи колхозсенче те 100 процентпех тултарнă.

Анчах чылай районсенчи çĕрĕç органĕсен руководителĕсем выранти удобренисем хатĕрлес ĕçе хакламаççĕ. Октябрьски (райзо заведующийĕ Портнов юлташ), Куславкка (райзо заведующийĕ Григорьев юлташ), Тăвай (райзо заведующийĕ Евграфов юлташ) т. ыт. чылай районсем пилĕккунлăх заданине 9 процентран пуçласа 25 процента çити çеç пурнăçа кĕртнĕ. Вăрнар райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Алексеев, Сĕнтĕрвăрри райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Железков, Советски райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Ятманов юлташсем вара хăйсен районĕнче пĕрремĕш пилĕккунлăхра выранти удобренисене мĕнчухлĕ хатĕрленине те пĕлмеççĕ.

Уйăхлăх пуçланнăранпа 11 кун иртрĕ, апла пулин те, çÿлте асăннă районсен руководителĕсем васкамаççĕ-ха, çак ĕçе чăннипе тытăнса уйăхлăха тивĕçлипе ертсе пыма тăрăшмаççĕ.

Çĕршывпа фронт тырпул, тата ялхуçалăх продукчĕсем ытларах та ытларах ыйтаççĕ. Çак ыйтăва тивĕçтерме пысăк тухăçлă тырпул туса илмн кирлĕ. Выранти удобренисем — тырпул тухăçлăхне ÿстермелли майсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Çавăнпа та выранти удобренисене хатĕрлесе турттарса тухас ĕçе хакламанни пулмалла мар.

Хĕрсех тислĕк турттараççĕ

ВАРНАР, январĕн 11-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем кăçалхи суракине кăтартуллăн ирттерме хатĕрленеççĕ. Мĕлĕшри Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем уя тислĕк çеç мар, тата 400 лав торф та кăларчĕç. Колхоз кăçал хăйĕн уй-хирне пурĕ 4.500 лав торф кăларма палăртнă. Çакăнпа пĕрлех колхоз пур йышши культурăсен вăрлăхĕсене те акмалли кондицие çитерсе уйăрса хунă.

Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз кÿлĕсенчен юшкăн кăларать. Паянхи куна уя 700 лав юшкăн кăларнă та ĕнтĕ. Ку ĕç малалла пырать.

Уйăхлăха хутшăнса нумай колхозсем выранти удобренисене пухса уя кăларас ĕçе вăйлатрĕç. Хурăнсур Çармăсри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз кĕске вăхăт хушшинче 3.600 лав тислĕк кăларнă, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз вунă кун хушшинче уя 2.800 лав тислĕк кăларчĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен уйăхлăхăн малтанхи вунă кунĕ хушшинче районри колхозсем уя 18 пин лав тислĕк кăларнă, 800 центнер кĕл пухнă.

И. ДАНИЛОВ.
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

1943 çулти тырпул никĕсне хываççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Алманчăри «12 лет Октября» колхоз выранти удобренисене хатĕрлемелли уйăхлăха хутшăнса уя 1.200 лав тислĕк кăларчĕ. Ытти удобренисене те нумай пухнă: кĕл 70 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 60 центнер пухса хатĕрленĕ.

Çакăнпа пĕрлех колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшри ытти ĕçсене те туса пырать. 25 гектар çинче юр тытса хăварнă, вăрлăхсене хатĕрлесе çитерессĕ. 150 пăт вăрлăхлăх пăрçана алăпа суйласа сортланă. Плугсемпе сеялкăсене тата транспорт инвентарьне юсаса пĕтернĕ.

Колхоз председателĕ Васильев юлташ ĕçе лайăх йĕркелесе пырать. Фронтран таврăннă хыççăнах вăл колхоза ертсе пыма тытăнчĕ. Халĕ 1943 çулта колхоза мала кăларассишĕн тăрăшать.

И. Х.

Судпа прокуратура тата суту-илÿ работникĕсен канашлăвĕ

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ январĕн 9-мĕшпе 10-мĕшĕнче Шупашкарта судпа прокуратура тата суту-илÿ работникĕсен республикăри канашлăвне ирттерчĕç. Канашлу икĕ ыйту—потребкооперацире суту-илÿ организацийĕсенче растрата тăвакансемпе обществăллă пурлăха çаратакансене хирĕç кĕрешесси çинчен ЧАССР прокурорĕн Котов юлташăн докладне, прогул тăвакансемпе тата производствăран хăйсен ирĕкĕпе пăрахса каякансене хирĕç кĕрешес ĕçе мĕнле туса пыни çинчен ЧАССР Юстици Халăх Комиссарĕн Краснов юлташăн докладне сÿтсе-яврĕ. Унта районсенчи прокурорсемпе халăх судьисем, райпотребсоюзсен председателĕсем тата суту-илÿ отделĕсен представителĕсем пулчĕç. Канашлу ĕçĕсене ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Никитин, ЧАССР Совнаркомĕн Председатель заместителĕ Семенов, РСФСР Юстици Халăх Комиссариачĕн представителĕ Белобржек юлташсем хутшăнчĕç.

Канашлура Крюков, Мурзин (Улатăр), Сироткин (Канаш), ЧАССР Верховнăй сучĕн председателĕ Алексеев, Тимаков (Тăвай), ЧАССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ Никитин, Швец (Советское), Ямпольский (Йĕпреç), ЧАССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕ Ларионов, ЧАССР Совнаркомĕн председатель заместителĕ Семенов, ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Никитин юлташсем тухса калаçрĕç.

Иккĕмĕш ыйтупа ЧАССР Юстици Халăх Комиссарĕн Краснов юлташăн докладне итлесе сÿтсе-яврĕç. Ун хыççăн Леонтьев (Шупашкар), Савушкина (Канаш), Красильникова (Вăрнар), Григорьев (Канаш), Андреев (Куславкка) Быстричкин (Шупашкар), РСФСР Юстици Халăх Комиссариачĕн представителĕ Белобржек юлташ, Бельский (Шупашкар), Лермонтов (Çĕмĕрле), Вертягина (Шупашкар) юлташсем тухса калаçрĕç.

Докладчиксем тата пренире тухса калакансем прогульщиксене тата производствăран хăйсен ирĕкĕпе пăрахса каякансене, растратчиксене тата социализмлă пурлăха çаратакансене хирĕç кĕрешесси республикăри хăшпĕр районсенче чылай сÿрĕкленнине кăтартса пачĕç, ку тĕлĕшпе начар ĕçлекенсене критиклерĕç, çитменлĕхсене пĕтерме татăклă мероприятисем палăртрĕç.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. ИККĔН 30 ФАШИСТА ХИРĔÇ

Сержант Ивановпа красноармеец Лобов госпитальре юсаннă хыççăн хăйсен чаçне таврăнма тухнă. Çултан пăрăнса сĕрт тăррине хăпарсан, вĕсен пуçĕсем урлă пульăсем шăхăрса вĕçме пуçланă. Вĕсем нумай шутласа тăман, аяккалла пăрăннă та юр çине выртнă. Сержант Иванов, йĕри-тавра тĕплĕн тинкерсе пăхсан, ту хĕррипе вĕсем патнелле тăшманăн салтакĕсем шăвăнса пынине курнă. Нимĕçсен пĕр ушкăнĕ умран пынă. Вăл 200 метр аяккарахра пулнă. Тепĕр ушкăнĕ вара боецсене хыçран çавăрса илме хатĕрленнĕ.

Икĕ паттăр хăраса ÿкмеççĕ. Вĕсем фашистсемпе çапăçăва тухма шут тытаççĕ.

— Эпĕ ту çинчен анса вĕсен хыçне тухатăп, — терĕ сержант. — Манăн автомат ĕçлеме пуçланине илтсенех эсĕ те пеме тытăн.

Фашистсем кăшкăра-кăшкăра сержант еннелле чупма пуçларĕç. Иванов хăйĕн автоматĕнчен персе малтанхи самантрах 5 фашиста вĕлерчĕ. Çав хушăра ту çинче, юлнă Лобов красноармеец фашистсен тепĕр ушкăнĕ çине автоматран хаяр вут-çулăм тăкма тытăнчĕ. Фашистсем хăйсене хупăрласа илнĕ тесе шутларĕç пулмалла, хăраса аяккалла чупма пикенчĕç. Вуннăмĕш харăсах аллисене çÿлелле çĕклерĕç.

— Автоматсене пăрахăр, уясăран сире пурсăра та вилĕм кĕтет, — хыттăн кăшкăрчĕ сержант.

Ту çинчен Лобов фашистсен тепĕр ушкăнĕ çине гранатăсем вăркăнтарма тытăнсан, сехри хăпнă фашистсем, автомачĕсене çĕр çине хурса, аллисене çÿлелле çĕклерĕç. Сержант Ивановпа красноармеец Лобов, ура çине тăрса, аллисене çÿлелле çĕклесе тыткăна парăннă фашистсем умне васкавлăн чупса тухрĕç. Хăйсен чаплă та чее ĕçĕ çĕнтерÿпе вĕçленнине кура, вĕсем пĕр-пĕрин çине савăнăçлăн пăхса кулса илчĕç.

Çак кĕске çапăçура икĕ паттăр воин 10 фашиста вĕлерчĕç. Юлашки тыткăна парăннă 20 салтака хăйсен полкне илсе пычĕç.

Çапла тăван çĕршывăн мухтава тивĕçлĕ икĕ ывăлĕ 30 фашиста çĕнтерчĕç. Вĕсене иккĕшне те Правительство наградине пама тăратнă.

Лейтенант П. КРАСНОВ.

2. КАЛИНИНО РАЙОНĔНЧИ «ДРУЖБА» КОЛХОЗĂН ЧЛЕНĔСЕНЕ

Хисеплĕ колхозниксемпе колхозницăсем! Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем пирĕн аслă çĕршывăн ылханлă тăшманне хирĕç кĕрешĕве çĕкленчĕç. Çак кĕрешÿре чăваш халăхĕн ывăлĕ, сирĕн ял çынни Андрей Иванович Иванов юлташ та хăйĕн пысăк паттăрлăхне кăтартрĕ, вăл нумай воинсен пурнăçĕсене çăлса хăварчĕ.

Иванов юлташ пирĕн подразделенире санитар пулса ĕçлет. Вăл яланах çапăçу хирĕнче, боецсемпе пĕрле. Ăçта, кама пулăшу кирлине вăл тимлĕн сăнаса пырать. Тăшман тăвăллăн персе тăнине пăхмасăрах, вăл аманнă боец патне питĕ ăста шăвăнса пырать те аманнă çынна çапăçу хирĕнчен илсе тухса, малтанхи пулăшу парать. Унтан вара малалла ăсатать.

Çапăçу виçĕ кун хушши пынă. Çав вăхăтра Иванов юлташ çапăçу хирĕнчен аманнă боецсене 63 çынна илсе тухнă. Пирĕн соединенин командованийĕ Иванов юлташăн пултарулăхне пысăка хурса хакларĕ, ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕ.

Пирĕн чаçри медицина работникĕсен канашлăвĕнче Иванов юлташ малашне татах та лайăхрах ĕçлеме, боецсемпе командирсен пурнăçĕсемшĕн татах та тимлĕнрех тăрăшма сăмах пачĕ.

Хаклă колхозниксем! Эпир сире çакăн çинчен калаçа парса хăварăп колхозра сирĕн земляк — Иванов юлташ пекех вăя хĕрхенмесĕр, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме чĕнетпĕр. Иванов пек паттăр çынсене эсир татах та ытларах пăхса çитĕнтерĕр.

Военфельдшер Ф. СМОЛЯКОВ.
Старшина М. КУПЕРМАН.

3. ТĂВАН ÇĔРШЫВШĂН

Эпир, фронтăн пĕрремĕш линийĕнче тăракан боецсемпе кĕçĕн командирсем, тăван республикăна хĕрÿллĕ салам яратпăр.

Урса кайнă Гитлера хăвăртрах пĕтерсе тăкассишĕн пĕтĕм Совет Союзĕ хаяр кĕрешĕве çĕкленчĕ. Тăван çĕршыври республикăсемпе облаçсем, уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем аслă нарком Сталин юлташ патне çыруссем çырса, хăйсем танксен колоннисемпе самолетсен эскадрильисем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тума çĕре нумай пиншер те миллионшар тенкĕ укçа пухни çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем хушшинче пирĕн Чăваш республикипе унти колхозниксем те пур. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума укçа, тенкĕ пухни çинчен пĕлтĕмĕр эпир.

Итле, юратнă тăван республика! Эпир те, фронтри боецсемпе командирсем, сирĕн рете тăратпăр. Пирĕн сиртен юлас килмест. Тăван Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалне татах та ытларах вăйлантарас тесе, эпир хамăрăн содержани укçийĕнчен пухăнса пынă укçа-тенкĕне Хĕрлĕ Çар фондне паратпăр. Çапла, сержант И. П. Любимов — 300 тенкĕ, сержант П. М. Михайлов — 154 тенкĕ, кĕçĕн сержант Крючков — 125 тенкĕ, наводчик Викторов — 97 тенкĕ, боец И. Ф. Федоров — 97 тенкĕ, боец Г. И. Иванов — 125 тенкĕ пачĕç.

Итле, тăван республика, сана ăнсăр укçупа тунă çĕнĕрен те çĕнĕ хĕçпăшалсене алла тытса эпир ылханлă тăшмана çапса аркатăпăр, аслă çĕршывăн талккишĕсене гитлерла ирсĕрсенчен тасатăпăр, татах хавасла та телейлĕ пурнăç тума тытăнăпăр.

Тăван республикăри колхозниксемпе колхозницăсене хĕрÿллĕн саламласа:

Сержант И. ЛЮБИМОВ, сержант П. МИХАЙЛОВ, кĕçĕн сержант КРЮЧКОВ, наводчик Н. ВИКТОРОВ, наводчик И. ФЕДОРОВ, красноармеец Г. ИВАНОВ.

КОМСОМОЛА КĔРЕÇÇĔ

Районсенче халĕ призыв комиссийĕсем ĕçлеççĕ. Призыва пыракан çамрăксен комсомола кĕрес туртăмĕ питех те пысăк. Çавăнпа вăл комиссисем çумĕнче халĕ ятарласа комсомолăн вăхăтлăх организацийĕсене тунă. Çамрăксем хăйсен заявленийĕсенче çапла çыраççĕ: «Пире совет влаçĕ пăхса çитĕнтерчĕ, Хĕрлĕ Çара эпир ленинла-сталинла комсомолăн членĕсем пулса каяс тетпĕр», теççĕ.

Етĕрне районĕнче призывăн икĕ кунĕ хушшинче ВЛКСМ ретне 63 çынна илнĕ. Вĕсене çийĕнчех комсомол билечĕсем панă. Çавăн пекех Ишлей районĕнче 22 призывника ВЛКСМ ретне илнĕ.

Чувашская контора Главкинопрокат получила и выпускает на экраны республики новый звуковой художественный фильм

СЕКРЕТАРЬ РАЙКОМА

Сценарий И. ПРУТА
Режиссер — лауреат Сталинской премии, заслуженный деятель искусств **И. Пырьев.**
Оператор — **В. Павлов.**

В главных ролях: лауреаты Сталинской премии **Марина Ладынина** и **Михаил Жаров**, заслуженные артисты РСФСР **В. Ванин, М. Астанков, Б. Пославский.**

Производство Центральной объединенной киностудии.

С 11 декабря фильм демонстрируется в Чебоксарском кинотеатре.

Чувашской конторе Главзаготскот центра срочно требуются на постоянную работу главные и старшие бухгалтера для работы в райконторах и машинистка.

За справками обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Канашская, 21.

15 января 1943 года в гор. Канаше при Автошколе открываются **курсы шоферов** с отрывом от производства. Срок обучения 45 дней. Принимаются мужчины и женщины в возрасте не моложе 17 лет, имеющие образование не ниже 4-х классов.

Обучение на курсах безплатно. Кроме того, выдается стипендия от 80 до 120 руб. в месяц, а иногородним — квартирные 30 руб. в месяц.

Заявления с заверенными копиями документов об образовании, рождении, автобиографией, с 4-мя фотокарточками и почтовыми марками на 60 коп. направлять в Канашскую автошколу.

Управление Автотранспорта при Совнаркоме АССР.

Тархановский лесоучасток Росглавпиво продает дубовую клепку организациям и артелям. Цена по прейскуранту.

Адрес: Тарханы, Первомайского района.

РОСГЛАВПИВО.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 916 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58,34 п.